Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

66 (7706) № * Юн кун, 2009 çулхи августăн (çурла) 19-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Малта пыракан ĕç коллективĕсенче

## Тавар туянакансем кăмăллă



*Районта икĕ райпо пулни суту-илӳ культурине лайăхлатса пыма пулăшни пирки Муркаш енре пурăнакансем пĕртте иккĕленмеççĕ. Ара, куç умĕнчех улшăнаççĕ-çке магазинсемпе обществăлла апатлану предприятийĕсем. Тавар туянакансене магазина кĕрсен хăйсене кирлĕ тавара хăйсенех суйлаттарса алла илессине Муркаш райповĕнче пуринчен малтан З. Малыгина ертсе пыракан «Центральный» магазин вăя кĕртрĕ. Паян вăл талăкĕпех ĕçлекен магазин. Тавар çаврăнăшĕ те унăн ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне.*

*Ӳсĕмлĕ ĕçре сутуçăсен культури те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Çакна эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) сутуçăсем те аван ăнланаççĕ. Оксана Морозова, Светлана Ермолаева, Татьяна Ефимова сутуçă-кассирсем хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçлаççĕ, суту-илӳ культурине çӳллĕ шайра тытма тăрăшаççĕ.*

*Тавар туянакансем кунтан кăмăллă тухнинчен тĕлĕнме те кирлĕ мар.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Паянхи кун ыйтăвĕсемпе

## Кĕр аки çитрĕ: вăхăтлă ĕçлер

***Кĕрхи культурăсем валли нӳрĕк яланах çителĕклĕ пулнине тата вĕсем çулленех пысăк тухăç панине шута илсе, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисемпе агрономĕсем çуркуннерен пуçласах çак тырăсене ытларах акса хăварасси пирки калаçаççĕ, тивĕçлĕ анасем хатĕрлеме çур акире пысăк лаптăксене пусу хăвараççĕ. Вĕсене çу каçа технологие пăхăнса тирпейлĕ пăхса тăнисемшĕн тепĕр ĕç вăхăчĕ çитрĕ – кĕр аки. Ака-суха технологине пăхăнса ĕçлекене кăçал тăнă шăрăх çанталăк та питех хăратмарĕ. Вĕсен тухăçĕ те ыттисенчен пысăкрах. Черетлĕ кĕр акине тĕплĕ хатĕрленнисем паян иртен пуçласа каçчен хирте. Юнашар хирсенче юлашки гектарсем çинче вырма пырать, хыççăнах улăм пуçтарăнать, «хурçă утсем» малтанхи гектарсем çинче çĕртме сухи тăваççĕ. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Кĕр аки ыйтăвĕпе районти ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономне А. ПАВЛОВА сăмах патăмăр.***

– Аслă асаттесемех ыраша, кĕл çине пулсан та, вăхăтра акса хăварма каланă. Шутласа тупнă сăмахсем мар – çĕр ĕçченĕ çĕршер çул тĕрĕсленĕ ĕç чăнлăхĕ. Ăна кун йĕркине тăратса çывăх вăхăтра кĕр аки ирттермелле, çитес çулхи тыр-пул тухăçне хывса хăвармалла.

Пирĕн тăрăхра вырмапа кĕр аки хушши çукпа пĕрех пулнăран çĕнĕ тырăран хатĕрленĕ вăрлăхпа шанчăклах пулманран, акара ытларах иртнĕ çул хатĕрленĕ вăрлăха акма тăрăшмалла.

Кăçал пирĕн 1250 гектар ыраш тата 4250 гектар кĕрхи тулă акса хăвармалла. Акана тухакансен кĕрхи культурăсен биологилле уйрăмлăхне самантлăха та манма юрамасть. Кĕрхи тулă 1-2 градус ăшăра шăтма пуçлать. Анчах вĕсене харăс çĕкленме 12-15 градус ăшă кирлĕ. Калчасем кĕркунне тата çуркунне нӳрĕк çителĕклĕ чух тата 8-10 градус ăшăра лайăх çăраланаççĕ. Хĕле кĕриччен кĕрхи тулă 3-4 хунав ярать. Çав хунавсем çитес çул пурте пучахлă пулаççĕ. Кĕрхи тулă пулăхлă, нӳрĕк çителĕклĕ, çумран таса уйсенче пысăк тухăçпа савăнтарать. Нӳрĕк çителĕксĕр уйсенче акнă анана катоксемпе пусăрăнтарни нӳрĕке çиелти сие кăларса калчасене туслă шăтма тата хĕле кĕриччен лайăх çăраланма пулăшать.

Кĕрхи тулăна таса пусăсене акни вырăнлăрах. Кунта пухăннă нӳрĕклĕхпе, минераллă апатлану элеменчĕсемпе акнă культура çăмăлрах усă курать. Акмалли лаптăк сахалтан та уйăх малтан хатĕр пулмалла, анана лайăх тикĕслемелле. Таса пусăсене акнă «Мироновская-808», «Московская-39», «Казанская-560», «Галина» сортсем лайăх тухăçпа савăнтараççĕ. Акара пĕр гектар пуçне пĕр центнер хутăш удобренисемпе усă курни ăнăçу çулне уçать çеç. Акана тухаканăн кĕрхи вегетаци тапхăрĕ 50-55 кун пулнине шута илмелле. Çавăнпа та кĕрхи культурăсем акмалли оптималлă вăхăт августăн 20-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 5-мĕшĕччен.

Ака норми. «Безенчукская-380», «Казанская-560», «Мироновская-808», «Московская-39» сортсен ака норми таса пусăра гектар пуçне 5,5-6 миллион шăтакан вăрлăх. Августăн 30-мĕшĕ хыççăн ака нормине ӳстермелле. Кĕрхи тулăна 5 сантиметр тарăнăшне акмалла.

**– Кĕрхи тепĕр культура вăл ыраш. Ăна акассинчи вăрттăнлăхсем мĕнлерех тата?**

– Кĕрхи тулăпа танлаштарсан, ыраш çĕр пулăхлăхне те, удобренипе-гербицидсемпе ĕçленине те питĕ ыйтсах каймасть. Анчах хăй çĕр пахалăхне самай лайăхлатать. Çапла вара вăл экологи тĕлĕшĕнчен таса тата йӳнĕ тырă туса илмелли çула уçать. Çапах ку культурăшăн та çĕр пахалăхĕ малти вырăнта.

Ыраш туслă та пĕр вăхăтра шăттăр тесен вăрлăха вырма хыççăн вăхăтра тата лайăх типĕтни, тасатни, пĕлсе упрани тĕп вырăнта пулнине асра тытмалла. Кунта та иртнĕ çулхи вăрлăха акни ăнăçлă тухăç илме çул парать. Пирĕн тăрăхшăн районланă сортсем: «Безенчукская-87» тата «Таленская-4».

Ыраш акмалли вăхăт: кĕркунне вырма хыççăн хатĕрленĕ пусăсене августăн 20 – 25-мĕшĕсенче; таса пусăсемпе сидераллă культурăсем ӳснĕ анасем çине августăн 25 – 30-мĕшĕсенче. Акана сентябрĕн 5-мĕшĕччен вĕçлемелле. Çак вăхăтран кая юлса акнă калча хĕле лайăх аталанса кĕреймест. Ку хир кĕркуннех çуркунне тепĕр хут акмалли кандидат пулса юлать. Таса пусăсене иртерех акнă ыраш ытларах аталанса кайса хĕлле юр айĕнче пĕтнине практика кăтартса парать. Ыраш калчи лайăх аталанса юлтăр тесен акнă хыççăнхи вегетаци тапхăрĕ 40-42 кун кирлĕ.

Кĕрхи культурăсен вăрлăхĕ çителĕксĕр хуçалăхсене пĕлме: паян «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕнче кĕрхи тулăн «Безенчукская-380» элита, «Казанская-560» элита, ырашăн «Фаленская-4» элита сорчĕсем сутлăх пур. «Герой» кооператив элитăллă вăрлăх хуçалăхĕ пулнăран вĕсенчен туяннă вăрлăхшăн РФ тата ЧР бюджечĕсенчен дотаци илме майĕ пур.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

***Редакцирен:*** Хаçатăн çитес номерĕнче тулăпа ыраш хутăшĕн гибричĕ – тритикале – пирки сăмах пулĕ. Ăна та кĕркунне акса хăварни – пысăк тухăç никĕсĕ.

Вырма – 2009

## Хирсем пушанаççĕ

**Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче пăхса ӳстернĕ тыр-пула кĕске вăхăтра тата çухатусемсĕр пухса илессипе çивĕч кĕрешӳ пырать. Çурла уйăхĕн 18-мĕшĕ тĕлне пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем тырă-пулăна 7473 гектар çинчен (58,7 процент) пухса кĕртнĕ. Вырма ĕçĕсем «Герой», «Оринино», Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче кал-кал пыраççĕ. А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхĕнче вара 160 гектар çинчи тырă-пулăна пĕтĕмпех пуçтарса кĕртнĕ.**

**Çĕнĕ çăкăр тухăçĕ районĕпе вăтамран 24,8 центнерпа танлашать пулсан, унăн виçи «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче 40 ц., Ильич яч. хис. хуçалăхра 36,4 ц., «Ударник» хуçалăхра 32 ц., Чкалов яч. хис. кооперативра 30,5 центнер.**

**Вырма irттернĕ хирсене (5073 гектар) улăмран тасатнă.**

**«Герой» тата «ДаАн» хуçалăхсем 14 гектар çĕр улми кăларнă.**

**Иртнĕ кунсенче Ильич яч. хис., «Передовик», Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе О. Пайгусова хресчен (фермер) хуçалăхĕнче кĕрхи культурăсем акма тухнă. Ку ĕçе 40 гектар çинче пурнăçланă.**

**Хамăр инф.**

Танлаштарăр

## Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРЛА УЙĂХĔН 18-МĔШĔНЧЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 9,2 | 0,9 |
| «Восток» | 7,3 | -1,8 |
| «Герой» | 14,2 | 1,7 |
| Ильич яч. хис. | 13,3 | -0,3 |
| Ленин яч. хис. | 10,0 | -0,8 |
| «Оринино» | 13,1 | 0,4 |
| «Передовик» | 13,1 | 4,5 |
| «Свобода» | 11,7 | -0,3 |
| Суворов яч. хис. | 13,5 | 1,5 |
| «Ударник» | 12,9 | 0,7 |
| Чапаев яч. хис. | 8,3 | -2,9 |
| Чкалов яч. хис. | 10,4 | -1,8 |
| «Хлебороб» | 9,3 | 1,1 |
| РАЙОНĔПЕ | 12,1 | 0,6 |

Ӳнер

## Ыран выставка уçăлать

Илья Петрович Афанасьев художника районта, республикăра аван пĕлеççĕ. Мăн Шаптак ялĕнче çуралнăскер, мĕн пĕчĕкренех илемлĕ ӳкерме вĕренес шухăшпа пурăннă. Шупашкарти педагогика институтĕнче хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртет. Хыççăнах çамрăк художник Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта ĕçлеме тытăнать. 1991 çултанпа вăл районти искусство шкулĕнче вăй хурать. 24 çул хушшинче чылай вĕренекен унăн çулĕпе кайнă ĕнтĕ, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене саланнă. Халĕ те 30 яхăн вĕренекене ӳнер тĕнчин вăрттăнлăхĕсене уçма вĕрентет.

1983 çултанпах Илья Петрович хăйĕн ĕçĕсене республикăри выставкăсене тăратать. Кăмăлласçĕ çынсем вăл тунă ӳкерчĕксене, ытларах килĕшнисене вара туянмасăр та тăмаççĕ.

Акă ыран, августăн 20-мĕшĕнче, Мăн Сĕнтĕрти «Илем» картина галерейинче («Мечта» ача сачĕпе юнашар) унăн ĕçĕсен выставки уçăлать. Кашниех çак выставкăра ӳкерчĕксемпе киленсе лăпкăлăх тупасси пĕртте иккĕлентермест. Ачасене те çак выставкăпа паллашни питĕ усăллă пулĕ.

К сведению граждан

## Приглашает общественная приемная

Региональная общественная приемная Председателя Партии «Единая Россия» В.В. Путина в Чувашской Республике 21 августа 2009 года проводит выездной прием жителей Моргаушского района. Прием проводится в:

Ярабайкасинском сельском Доме культуры с 10.00 до 11.00 часов;

Сыбайкасинском сельском Доме культуры с 11.30 до 12.30 часов;

Большесундырской модельной библиотеке с 14.00 до 15.00 часов.

Телефоны для справок: 62-1-80, 8-937-386-40-14.

Саламлатпăр



Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕньял Хуракассинче пурăнакан ĕç ветеранне, хамăрăн юратнă йăмăка, аннене тата хунямана, ырă кăмăллă асаннепе кукамая, пахаран та паха ватă кукамая, çепĕç кăмăллă тăхлачăна, хисеплĕ тăванăмăра – **Валентина Димитриевна ВАСИЛЬЕВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. 72 çул хушшинче пурнăçри нумай йывăрлăхсем витĕр тухса та эсĕ çын илемне, ĕç юратăвне çухатман, ялта ят яман. Хăвăн тăрăшулăхупа икĕ ывăлупа хĕрӳ пурăнмалли çуртсем лартнă çĕре мĕн чуль кукăль пĕçерсе панине кам шутланă-ши? Никам та, анчах эсĕ тунă ырă ĕçсене эпир йăлтах астăватпăр. Çавăнпа сана татах нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: аппăшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, 8 мăнукĕпе 2 прамăнукĕ, хăти-тăхлачисем.**



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмашра пурăнакан юратнă хĕрĕме, мăшăра, аннене, йăмăка, кине – **Нина Андреевна КАЛАШНИКОВАНА** çуралнă кунĕпе ăшшăн саламлатпăр. Август уйăхĕ çулталăкри пур çимĕçпе те чи пуян уйăх пулнăран сана та çавнашкалах тулли те çителĕклĕ пурнăçпа ĕмĕр савăнса пурăнма, эпир пырсан тулли кĕрекепе кĕтсе илме тата ырă кăмăлпа ăсатса яма, ачу-пăчупа савăнса, çирĕп сывлăхпа нумай çул пире савăнтарса пурăнма вăрăм ĕмĕр, телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕсем, аппăшĕпе пиччĕшĕн çемйисем, хунямипе хуньстарикĕ, çывăх тăванĕсем.**

ÇЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**